# Çывăх тăван мар-и?

**ÇЫРĂНТАРУ - 2011**

«Тăван Атăл» журнал тухма тытăннăранпа 80 çул çитрĕ. Çут тĕнчене вăл «Трактор» ятпа килнĕ. Килсе тăран тăван сивĕнмест. «Тăван Атăл» журнала та эсир уйăхсерен çапла йышăннăн туйăнать. Чăн та тăван мар-и-ха? Ячĕшĕн кăна мар, сирĕн шухăш-кăмăлăр, ырă туйăмăр, çутă ĕмĕтĕр журнал чунĕпе пĕр килнĕрен çапла пулса пырать. Унсăрăн епле-ха 80 çул пĕрле пулайăн?!

«Капкăн» журнал кун çути курнăранпа 85 çул çитрĕ. Вăл та, «Тăван Атăл» пекех, нихăçан та халăхран уйрăлман, йывăрлăхсене, нуша-терте пĕрле тӳссе ирттернĕ: малтанхи тапхăрта та, вăрçă çулĕсенче те, иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнчи çуклăхра та. Паянхи пурнăç йывăрлăхĕсене те пĕр пек туймаççĕ-и-ха вулакансемпе журнал кăларакансем тата çыравçăсем?

Вырăсла тухса тăракан «ЛИК – Литература. Искусство. Культура» журнал чылай çамрăкрах-ха. Çапах та вăл кĕске вăхăтрах ят-сумне çĕклеме пултарчĕ.

Çирĕплетсех калама пултаратпăр: «Тăван Атăл», «Капкăн», «ЛИК» çĕнĕ вăй-хăват илчĕç. Çĕнĕ çыравçăсем хайлавсене пичетлесех тăрĕç, редакцисенчи ĕçченсем сирĕншĕн çанă тавăрса тăрăшĕç.

Тăванпа тăван хушшинче те тепĕр чух ăнланманни пулкалать, пĕр-пĕринчен сивĕнмешкĕн сăлтав тупăнкалать. Анчах эпир хамăр тăванлăх туйăмне яланах упрăпăр, сирĕншĕн тăрăшса вăй-хала, пултарулăха шеллемĕпĕр. Çырăнтару, паллах, укçа-тенкĕпе те çыхăннă. Пирĕн журналсем хаклах мар: «Тăван Атăл» çур çуллăха – 222 тенкĕ те 90 пус (каталогри индексĕ 11529), «Капкăн» – 117 тенкĕ те 60 пус (24608), «ЛИК» – 124 тенкĕ те 30 пус (83429).

Хисеплĕ вулакансем, пирĕн журналсем сирĕн пата пырсах тăччăр, эсир вĕсене кашнинчех чи çывăх тăван вырăнне хурса йышăнсамăр. Малашне те пĕрлех пулар. Тăван пулса пĕрле тăваллах талпăнар.

**Сергей ПАВЛОВ,**
**«Атăл-Волга» издательство çурчĕн директорĕ-тĕп редакторĕ.**

# Чи пысăк парне

**Пĕчĕк чухне шутсăрах вĕрентекен пулма ĕмĕтленеттĕм. Анне те учитель-çке! Ăна валеçӳ карточкисем, стена хаçачĕсем тума пулăшаттăм. Тетрадь тĕрĕслеме шанса пани вара чăн телейччĕ! Тăрăшса йăнăшсем шыраттăм. Пĕри те сиксе ан юлтăр теттĕм-çке. Унсăрăн аннеçĕм тек хĕрлĕ ручка тыттармасть алла.**



Кăçалхи нарăс уйăхĕнче пире, 4-мĕш курс студенчĕсене, педагогика практикине ăсатрĕç. Пилĕк эрне Шупашкарти шкулсенче чăваш чĕлхине вĕрентрĕмĕр. Чи малтанах питĕ хăранăччĕ: «Ачасемпе еплерех пĕр чĕлхе тупмалла? Хам та çамрăк, халь тата вĕренекенсене пĕлӳ памалла». Хула ачисем чăваш чĕлхине хисеплеменни, ун çинчен ыр сăмахсемех каламанни пирки те пĕрре мар илтнĕ. Вăл та шиклĕх кĕрĕкне пĕркентерчĕ. Анчах кайран йăлтах сĕвĕрĕлчĕ. Пустуях анратнă иккен эпĕ хама.

50-мĕш вăтам шкулта Мария Николаевна Печникова вĕрентекен патне лекме тӳр килчĕ. Пĕрремĕш классемпе ĕçлерĕм, 5, 7, 10-мĕш классенче уроксем итлесе куртăм. Чăваш чĕлхине е литературине вĕренес килменнине, вĕсенчен йĕрĕннине курмарăм. Пачах тепĕр майлă. Кăсăкланаççĕ, пикенсех шĕкĕлчеççĕ. Чăвашла пĕлекенсем те пур. Ашшĕ-амăшĕ пилленĕ чĕлхепе хаваслансах пуплеççĕ вĕсем. Ыттисем вĕсене кăштах ăмсанаççĕ те. Маттур тантăшĕсенчен тĕслĕх илсе малалла талпăнаççĕ. Акă 5-мĕш «В» класри Лев ку вĕренӳ çулĕнче Мускавран куçса килнĕ. Малтанхи тапхăрта юлташĕсем чăвашла вуланине, калаçнине сăнанă вăл, каярахпа хăй те вĕренӳ процесне хутшăна пуçланă. Халĕ ансат ыйтусене те хуравлать Лев.

Пĕрремĕш классемпе питĕ интереслĕ. Тепĕр чухне кулăшла самантсем те сиксе тухаççĕ. Пĕринче «юмах», «юратать», «юман» сăмахсемпе предложенисем тумаллаччĕ. Иккĕмĕш сăмах патне çитрĕмĕр. Кăштах тăхтасан пĕр хĕр ача предложени йĕркелени çинчен пĕлтерчĕ. «Юра юратать жену», – терĕ хĕр пĕрчи. Ачасемшĕн кулăшла пулчĕ ку. Кайран хăй каланинчен хăй тĕлĕнсе çăварне алăпе хупларĕ, пичĕ хĕрелчĕ вĕренекенĕн.

«Я – красный помидор. Не ешьте меня», – текен те пур. Теприсем икĕ кун каннă хыççăн пĕрремĕш урока килеççĕ те тĕлĕрсе лараççĕ. Тĕрлĕ хусканусем тутарнипе, вăйăсене хутшăнтарнипе вăрататăп вара вĕсене. Ыйхи уçăлса çитсен тимлĕхĕ те ӳсет, вĕренес туртăмĕ те çуралать.

Шăпăрлансем: «Ольга Михайловна!» – тесе чĕннине хăнăхса çитеймерĕм. Мана мар, такама, урăххине чĕннĕн туйăнатчĕ. Ольга Михайловна пулма çамрăкха.

Практика вĕçленчĕ. Ачасенчен уйрălас килместчĕ. Вĕсем те манпа туслăччĕ ĕнтĕ. Сывпуллашнă чухне: «Мĕншĕн каятăр? Мĕншĕн юлмастăр?» – тесе ыйтрĕç хăюллăраххисем. Çакă мар-и-ха вăл практикантсемшĕн чи пысăк парне?

**Ольга АВСТРИЙСКАЯ,**
**ЧПУ студентки.**

# Академирен вĕренсе тухнă

Çĕнтерӳ кунне халалланă парадра Ача-пăча полици академийĕн вĕренекенĕсемпе преподавателĕсем Шупашкарти çар гарнизонĕ йышĕнче маршпа утса тухнă. Каярахпа академи вĕренекенĕсем, йăлана кĕнĕ тăрăх, залив хĕрринче Амăшĕн палăкĕ умĕнче пуханнă. РФ Наркотиксен çаврăнăшне асăрхаса тăракан службăн республикăри управленийĕн пуçлăхĕн заместителĕ В.Самаркин 33 ачана академирен вĕренсе тухни çинчен свидетельствăсене савăнăçлă лару-тăрура панă. Вăл çамрăк ăрăва воспитани парас ĕçре çарпа патриотизм юхăмĕ пысăк пĕлтерĕшлине каланă, пурне те сывă пурнăç йĕркине тытса пыма суннă.

Ачасене çавăн пекех ачасемпе çамрăксен пултарулăх çурчĕн тата «Тăван çĕршыв ачисем – тивĕçлĕ ăру» фонд директорĕсем саламланă.

# Кафере наркотик сутнă

**НАРКОТĔРĔСЛЕВ**

Шупашкарти «Малибу» паллă кафе-бар поварĕ наркотиксемпе хăй усă курни тата вĕсене кафере ĕç вăхăтĕнче сутни çинчен массăллă информаци хатĕрĕсенче чылай калаçрĕç. Наркотĕрĕслев сотрудникĕсем ăна пĕр çул каялла гашиш сутнă вăхăтра ярса тытнăччĕ. Ун чухне повар хăй айăпне йышăнман, оперативниксем провокаци тунă тесе айăплавран хăтăлма тăрăшнă. Анчах наркотĕрĕслев сотрудникĕсем поварнаркосутуçă тĕлĕшпе оперативлă шырав ĕçĕсене тĕплĕ ирттернĕ. Машинăра, урамра тата кафе-барта наркотик сутнă тĕслĕхсем П.Яруткин йывăр тата уйрăмах йывăр преступленисем тунине яр уççăн çирĕплетеççĕ. Уголовлă ĕç çумне видеопленкăсене, телефон калаçăвĕсен фонограммисене те хушнă.

Суд «Малибу» поварне РФ Уголовлă кодексĕн тĕрлĕ статйисемпе айăплă тесе йышăннă, 9 çуллăха ирĕкрен хăтарнă тата 100 пин тенкĕ штраф хунă.

Раççей Президенчĕ Д.Медведев çапла каланăччĕ: «Енчен те пĕр-пĕр заведение наркотиксене сарма усă кураççĕ, притона куçараççĕ пулсан, ертӳçĕсен яваплăхĕ çинчен ыйту тăратмалла, анчах чи витĕмли – заведени ĕç-хĕлне чарса лартмалла. Çакăн пек саккун проектне хатĕрлеме сĕнетĕп».

«Малибу» кафе-бара хупнă тейĕпĕр. Ытти каçхи заведенисен директорĕсен вара президентăн асăрхаттарăвне шута илмелле. Кайран ӳкĕнмелле ан пултăр.

* * *

Наркотĕрĕслев управленийĕ наркопритон тытакан тĕлĕшпе черетлĕ (çулталăк пуçланнăранпа 18-мĕш) уголовлă ĕç пуçарнă. Канашри 30-ти арçынна, ниçта та ĕçлеменскере, наркотик туянма укçа кирлĕ пулнă. Вăл хăйĕн хваттерĕнче наркомансене пухăнма ирĕк панă. Анчах нумаях иртĕхеймен арçын. Районсем хушшинчи Канашри пайăн сотрудникĕсем ăнăçсăр хваттер хуçине темиçе кун хушшинче тытса чарнă.

Çакнашкал преступленишĕнех Шупашкар çыннине айăпланă. Вăл та хăйĕн Гастелло урамĕнчи хваттерĕнче притон туса хунă. Наркомансем унта ирĕклĕнех кĕрсе çӳренĕ, дезоморфин хатĕрлеме газ плитипе, савăт-сапапа тата ытти япаласемпе усă курнă. Наркотиксемпе сиенленнĕрен пĕр ӳпкине каснине пула кăна арçын йывăр айăплавран хăтăлса юлнă. Суд ăна 8 уйăхлăха çирĕп режимлă колоние ăсатнă.

**Е.РОМАНОВА.**

**ЛИРИКĂЛЛĂ ПОВЕСТЬ**

**Владислав ПАСТУХОВ-АНАТКАС**

# Ан хурлан, шурă хурăнăм ...



*(Малалли. Пуçл. 42-43, 47– 53, 56–58-мĕш номерсенче)*

Юрату суккăр, теççĕ мар-и. Ăçта унта, юрату сиксе тухсан, тăван аннен сăмахĕсене те итлеместпĕр вĕт... Хамăртан телейлĕ те ăслă çын çук тесе те шутлатпăр мар-и? Ытла васканипе, туйăма хуçалантарнипе, умра халь-халь синкер-инкек сиксе тухасса пĕртте кĕтместпĕр те, шутламастпăр та пуль çав!..

Сергее Елкин тинкерсе-тинкерсе пăхса илчĕ те:

– Мана итлесе ывăнмарăн-и?–тесе ыйтрĕ. Хуравне кĕтсе илеймесĕрех сăмахне малалла кустарчĕ. Хăйне кăмăлласа итлекен çынпа калаçса кăштах та пулин чунне уçас терĕ пулмалла çав Качака Мишши.

– Çапла, тепĕр чух чуна çав тери уçса калаçас килет... Анчах никам та çумра сана итлекен çук: ни арăм, ни тусюлташ... Макăрса-йĕрсен те... Тăххăрмĕш класра вĕренекене, пукане пек хитре хĕре, юратса пăрахрăм вĕт. Чăннипех юратсан çапла пуль ĕнтĕ вăл: сан савнă хĕрӳ е каччу ыттисенчен чи хитри, чи хӳхĕмми, чи илемли... Çамрăк вăхăтра, çакă çутă тĕнчере маншăн та çаплаччĕ çав. «Ман хĕртен чи хитри, чи çырă çӳçли, чи кăн-кăвак куçли тĕнчере урăх çук та пулĕ», – тесе шутлаттăм. Хĕрĕ Фаина ятлăччĕ. Хушамачĕ – Соколова. Ашшĕ-амăшĕ ахаль çынсемччĕ. Çапла Фаина шкултан чи лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнине çирĕплетекен аттестата илнĕ кунах, чăваш йăли-йĕркипе туй туса, загсра çырăнсах пĕрлешрĕмĕр унпа. Эх, пăртакран питĕ хыпăнса ӳкрĕм эпĕ. Çав тери тем курма васкарăм мар-и? Ман пеккисем пирки ахальтенех каламан пулĕ: «Курманнин курас килет, курсан тарас килет...»– тесе. Хам савнă мăшăрăма институтран вĕренсе тухма та пулăшрăм. Курс тата тĕрĕслев ĕçĕсемпе пĕрле ларattăмăр ир-каçсерен. Пĕчĕкки, чунтан кĕтни çуралсан хамран телейлĕ çын çук пулĕ тесе шутлаттăм. Телее, хĕр ача çуралчĕ-çке! Иксĕмĕр те хĕр ача кĕтеттĕмĕр. Турри пире илтрĕ пулĕ, çавăнпа та пулăшрĕ ĕнтĕ. Савăнăç-телейпе вĕçсе çӳреттĕм. Анчах манăн юратăвăм нумая пымарĕ çав...

* * *

Качака Мишши калавне малалла ярăнтарчĕ:

– Савнă мăшăрăм, кăвак куçăм... Чăннипе пĕртте мана мар, ман çывăх тусăма, физкультурăпа вĕрентекене юратса пурăннă иккен Фаина Соколова-Елкина. Ман тус-учитель çемьеллĕ пулнăран çеç манпа пĕрлешнĕ иккен Фаина – Фаинăчкă!

Ку тĕле çитсен Елкин каллех пирусне мăкăрлантарса ячĕ, кинора туртакан чаплă артистсем пек çăварĕпе пирус тĕтĕмĕнчен çаврашка хыççăн çаврашка кăларчĕ. Унтан Серегина тимлемесĕрех сăмахне малалла кустарчĕ.

– Виçĕ кĕтеслĕ юрату пуçланчĕ вара пирĕн хушăра. Çакă маншăн каярахпа çеç паллă пулчĕ. Ялĕ пысăках марччĕ пулин те мăшăрăмпа тусăн «юратăвĕ» пирки эпĕ чи юлашкинчен çеç пĕлтĕм. Тепĕр чух шутлатпăр çав хамăр айван пуçăмăрпа: «Ман арăм чи лайăххи, ман арăм мана никампа та улăштарас çук, ман арăм мана нихăçан та никампа та улталас çук...» Çавăнпа та халĕ ун пек калакансенчен пăрăнса утма тăрăшатăп.

Шаннă кайăк чăннипех, нумай чух, йăвара çук иккен...

Юлашкинчен, пĕр кĕрхи хура кун, уйрăлтăмăр. Çав кун сивĕ çумăр кунĕпех тавралăха ислетрĕ. Те çанталăкĕ хăй мана шеллесе-хĕрхенсе макăрса йĕчĕ... Хам вара çав кун пĕр тумлам та куççулĕме кăлармарăм. Унччене макăрсайĕрсе «плана» тултарнăран. Чĕре кăна хăйĕн вырăнне тупаймарĕ. Кăкăртан ирĕке тухасла тапрĕ, макăрмаллипех макăрчĕ, çунмаллипех çунчĕ.

Пирĕн чаплă «юрату» çинчен хăй вăхăтĕнче «Коммунизм ялавĕ» (халĕ «Хыпар») хаçат та пĕрре кăна мар çырчĕ. «Коммунизм ялавĕ» ун чухне мораль темипе те çырма юрататчĕ. Обществăра ун чух мораль принципĕсем те пуш сăмахсем марччĕ. Мораль кодексĕ те хисепреччĕ...

Качака Мишши çакăн чухлĕ каласа панă хыççăн пĕр вăхăт шухăша кайса тăчĕ. Вара, шухăшран тăрук вăранса, сӳнсе ларнă пирусне асфальт çине пăрахса кирза аттипе таптарĕ, Серегин хăйне татах та итлеме хатĕррине туйсан сăмах çиппине татмарĕ: «Калама пултараймастăп,– терĕ вăл салхуллăн,–телейлĕ-и халь мăшăрăм пулнă кăвак куçăм е çук... Ку унăн шăпи! Пĕлетĕп: çын хуйхипе телейлĕ пулма йывăр. Пĕлетĕп: вăрланă юратупа пĕр вĕçĕм савăнăçлă пулма çук. Манăн тус-учитель хăйĕн арăмĕпе те, ман пулнă мăшăрăмпа та паян кунччен мĕнле пурăннине те пĕлетĕп. Пĕринпе кун çутинче, тепринпе каçсерен... Çакă-ши вара юрату?.. Çакă-ши вара çут телей?.. Кун пек юрату ытлашши йӳçĕ-çке! Пĕр-пĕр синкерлĕ кун пыра ларма та пултарать-çке капла, эккей...

*(Малалли пулать)*

